


НИ
КОМПЬЮ
СУПЕРМ

ПОДАРОК - ПРИ ПОКУПКЕ КОМПЬЮТЕРА

п. Ибреси, ул. Садовая, д. 7 /Дом быта/, 2 этаж, телефон: 2-22-62.
КРЕДИТ
www.nix.ru

Йĕпреç районĕн хаçачĕ

# ÇĔНТЕРЎШĔН

Шăматкун 2007 авăн, 8

72 /8989/№

Хаçат 1932 çултанпа тухса тăрать

Хакĕ ирĕклĕ

электронлă адрес: ibresi@press.cap.ru

## ЧĂВАШ ХАЛĂХĔПЕ РАÇÇЕЙ КОСМОНАВЧĔСЕМ АНДРИЯНĂМĂРĂН ÇУРАЛНĂ КУННЕ ПАЛЛĂ ТУРĔÇ

Юнкун Чăваш Республикине Космонавтсене хатĕрлекен Ю. А. Гагарин ячĕллĕ центртан делегаци килсе çитнĕ. Хăнасем Чăваш Енĕн мухтавлă ывăлĕ, Совет Союзĕн икĕ хут Геройĕ А. Г. Николаев космонавт летчик çуралнăранпа 78 çул çитнине халалланă мероприятисене хутшăннă. Вĕсем Шуршăлти Асăну комплексĕнче пулнă, Шупашкарти «Байконур» микрорайонти космонавтика музейне, Çĕнтерўçĕ Çветтуй Георгий часавайне çитсе курнă, И. Н. Ульянов ячĕллĕ ЧПУ спорткомплексĕнче А. Г. Николаев космонавт летчика халалланă дзюдо турнирне уçнă. Çавăн пекех сумлă делегаци Чăваш Республикин Президенчĕпе Николай Федоровпа пĕрле Шупашкарти А. Г. Николаев ячĕллĕ 10-мĕш шкулти савăнăçлă уява хутшăннă.

«Пĕрлĕхлĕ Раççей» («Единая Россия») парти ячĕпе Шупашкар мэрĕ Н. Емельянов шкул ачисене çĕнĕ стадион парнеленĕ, çав кунах ăна чаплă лару-тăрура уçнă.



## ЙĔПРЕÇСЕМ ЭСТАФЕТĂНА ВĂРНАРСЕНЕ ПАЧĔÇ

Авăн уйăхĕн 5-мĕшĕнче Йĕпреç районĕнчи шкулсенче вĕренекен ачасем СССР летчик-космонавтне, Совет Союзĕн икĕ хут Геройне А. Г. Николаева асăнса республикăра тăваттăмĕш хут ирттерекен çăмăл атлетсен эстафетине хамăр район çĕрĕ çинче йышăнчĕç. Улатăр районĕн чиккинче пĕчĕк митинг пулса иртнĕ хыççăн, Йĕпреç ачисем эстафетăна малалла тăсрĕç.

Йĕпреçри 1-мĕш номерлĕ вăтам шкул тĕлне çитсен эстафета участникĕсем тата çавăн пекех вĕренекенсемпе вĕрентекенсем мухтавлă чăваш ывăлне асăнса ирттернĕ митинга хутшăнчĕç. Пухăннисен умĕнче район пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ Вячеслав Михалик тухса каларĕ. Унтан эстафета участникĕсем Вăрнар районĕ еннелле çул тытрĕç. Кўршĕллĕ район границинче вĕсене вăрнарсем кĕтсе илчĕç.

Пирĕн район территорийĕпе иртнĕ çăмăл атлетсен чупăвне 150 вĕренекен, Буинскри, Йĕпреçри 1-мĕшпе 2-мĕш, Пысăк Упакассинчи вăтам, Шăртанти пĕтĕмĕшле пĕлў паракан тĕп шкулсен спортсменĕсем хутшăнчĕç.

***/Район администрацийĕн сайтĕнчен/.***

## РАЙОНĂН ХИСЕП ГРАМОТИПЕ НАГРАДĂЛАНĂ

Чăваш Тимешри вăтам шкул çуртне тунă çĕрте активлă ĕçленĕшĕн, пысăк тўпе хывнăшăн çак ĕçченсене районăн Хисеп грамотипе наградăланă:

**Валерий Алексеевич АНТОНОВА** – «Стройкомплект» ООО автокрановщикне;

**Николай Леонидович БОГДАНОВА** – «Стройкомплект» ООО автомобиль водительне;

**Валерий Геннадьевич АРХИПОВА** – «Вурнарыагрострой» ООО директорĕн производство енĕпе ĕçлекен заместительне;

**Светлана Митрофановна ПАВЛОВАНА** – «Вурнарыагрострой» ООО штукатур-малярне;

**Анатолий Николаевич АРХИПОВА** – «Ибресиагрострой» ООО разнорабочине;

**Людмила Наумовна КРАСНОВАНА** – «Ибресиагрострой» ООО штукатур-малярне.

x x x

Суту-илў объекчĕсем тăвас тата вĕсене тирпейлем кўрес енĕпе нумай çул тўрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн тата çуралнăранпа 55 çул çитнĕ май райпон инженер-строительне **Геннадий Васильевич МАКАРОВА** районăн Хисеп грамотипе наградăланă.

x x x

Культурăра нумай çул ăнăçлă тăрăшнăшăн районти тĕп библиотекăн литературăна комплектлакан тата ĕçлесе хатĕрлекен пай редакторне **Галина Николаевна МУХАМЕТЗЯНОВАНА** районăн Хисеп грамотипе наградăланă.

x x x

Районти предприятисенчи бухгалтер ĕçĕн тытăмĕнче нумай çул тўрĕ кăмăлпа тăрăшнăшăн «Районти «Водоканал» муниципалитет унитари предприятийĕн тĕп бухгалтерне **Лариса Аркадьевна МИХАЙЛОВАНА** районăн Хисеп грамотипе наградăланă.

## РАЙОН ХЫПАРÇИСĔР АН ЮЛĂР!

**Хаклă тусăмăрсем, хисеплĕ вулакансем! «Çĕнтерўшĕн» хаçата 2008 çулхи пĕрремĕш çур çул валли çырăнтармалли тапхăр пуçланчĕ. Ăна çак хаксемпе çырăнтараççĕ:**

**почта çыхăнăвĕн уйрăмĕсенче – 169 тенкĕ те 62 пуспа;**

**«Чăвашпичет» АУО киоскĕнче – 120 тенкĕпе;**

**хаçат редакцийĕнче /альтернативлă майпа/ – 105 тенкĕпе.**

**«Çĕнтерўшĕн» çĕршыв, республика, район хыпарĕсене чи малтан пĕлтерекен хаçат. Ăна çыранса илме ан манăр!**

## АНĂÇЛĂ СУТУ–ИЛЎН АНСАТ ВĂРТТĂНЛĂХĔСЕМ

Ⓡ

**Нумаях пулмасть пирĕн корреспондент пачах кĕтмен çĕртен пĕр тĕлĕнмелле событие çакланнă: Йĕпреç поселокĕнчи Энгельс урамĕнче вырнаçнă 41 «б» номерлĕ çуртри «Магнит» магазинта дегустаци пырать. Тавар туянма пынă çынсем сĕтел çине лартса тултарнă апат-çимĕçе активсе пăхма пултараççĕ иккен. Кунта тĕрлĕ соуссемпе кетчупсем, консерва изделийĕсем пур, çаксенченех бутербродсем туса хунă. Тулăх сĕтел çинчи апат-çимĕç питĕ хитрен курăнать, магазина килен-каянсене илĕртмеллипех илĕртет – мĕнле пăрăнса иртĕн? Пирĕн корреспондент та дегустаци участникĕ пулса тăнă, çавăнтах тутлă «кучченеçпе» сăйланакансенчен ахаль магазин тавар туянакансене сĕнекен «швед сĕтелĕ» çинчен мĕн шухăшланине ыйтса пĕлнĕ.**

– Ахаль магазин мар ку, – тўрех калаçăва хутшăнчĕ 60 çулсенчи хĕрарăм. – Кун пекки таврара урăх çук. Курăр-ха хăвăрах: кунта мĕнле апат-çимĕç сутаççĕ – пĕтĕмпех тутанса пăхма пулать. Хăш магазинта кун пек çĕнĕлĕхе çул панă? «Магнитра» кăна тавар пахалăхне тутанса пăхса пĕлме пулать. Мĕн килĕшрĕ – çавна туян! Лайăх вĕт. Пĕлмен япалана илес килмест. «Магнита» – XXI ĕмĕрти магазин тесех хаклас килет ман. Çавăнпа тавар туянакансем те кунтан таттăлмаççĕ, килсех тăраççĕ.

Чăн та, сентресем çинчи апат-çимĕç продукчĕсене тавар туянакансене тутантарса пăхасси йăлана кĕнĕ ку магазинта. Йĕпреçре пасар ĕçленĕ кунсенче, ытларикунсемпе эрнекунсенче, 10 сехетрен пуçласа 13 сехетчен, 15 сехетрен 18 сехетчен, ытти кунсенче 15 сехетрен 18 сехетчен мĕн те пулин тутанса пăхма сĕнеççĕ. Çуллахи шăрăх кунсенче напитоксемпе пылак шывсене, улма-çырла сĕткенĕсене дегустаци сĕтелĕ çине кăларнăччĕ. Çав вăхăтра ăш хыппине ирттерме тесех иртен-çўренсем çак магазина кĕре-кĕре тухатчĕç. Тўлевсĕр сокпа та сăйланать магазина кĕрекен çын тата мĕн те пулин туянса тухать.

– Тавар туянакансене çапла илĕртнипе тĕрĕс тăваççĕ «Магнит» магазин ĕçченĕсем, – пирĕн калаçăва хутшăнать 45 çулсенчи арçын. – Çынсем ку магазина мĕнле тавар туянма май пуррине пĕлсех килсе çўреççĕ. Тата кунта тăтăшах ытти магазинсенче çук апат-çимĕç продукчĕсене кўрсе килеççĕ. Вĕсене туяниччен тутанса пăхма майсем туса пани халăхшăн питĕ аван. Çынна мĕн килĕшет – çавна илет. «Магнит» ятлă магазинсем пурте халăх кăмăлне тивĕçтерессишĕн ĕçлеççĕ, вĕсен шухăш-кăмăлне пĕлсех тăраççĕ, тейĕн. Кун пек магазин пирĕн район центрĕнче те пурри пуриншĕн те меллĕ.

«Магнит» тавар туянакансене ытти кĕтменлĕхсемпе те савăнтарать. Дегустацисемсĕр пуçне кунта тăтăшах акцисем ирттереççĕ: ку е вăл тавар хакне самаях чакарса сутаççĕ. Çак магазина тăратакан тавар пахалăхĕ пирки иккĕленме кирлĕ мар. Вăл мĕнпур стандартсем ыйтнă шая тивĕçтерет. Сутăва кăларакан апат-çимĕç продукчĕсене çĕршыври чи пысăк предприятисенче туса кăлараççĕ, вĕсене тавар валеçекен чи пысăк центрсенчен тўрремĕн кўрсе килеççĕ, çавăнпа вĕсен хакĕсем «çыртмаççĕ». Мĕнле тавар хакне чакарса сутнине тўрех пĕлме пулать, тавар хакне кăтартнă хут çута-сарă тĕслĕ. Кунта килсе çўрекенсем çак паллăна тўрех асăрхаççĕ, акци пынă хушăра кирлĕ япалана йўнĕ хакпа туянса юлма васкаççĕ.

– Эпĕ «Магнит» магазинах суйласа илетĕп, – тет тепĕр тавар туянакан. – Кунта тавара суйласа, пахалăхĕ çинчен çырнине вуласа туянма пулать. Суту-илў салонĕ пысăках мар пулин те, кунта пĕтĕмпех лайăх вырнаçтарса тухнă, мĕнпур тавар алă тупанĕ çинчи пекех курăнать. Магазинта ялан таса, тирпейлĕ. Мĕн кирлине пĕтĕмпех кунта – «Магнитра» туянма пулать. Хакĕсене пăхсан та, тавар ытти çĕртинчен нумай йўнĕ. Кĕрпесем, кĕпе çумалли порошок, тип çу илме эпĕ ялан тенĕ пекех кунта килетĕп. Мана типçусенчен чи йўнни «Зернышко» ятли, порошоксенчен – «Семь планет» ятли мана питĕ килĕшет. Çăкăр-булка, кондитер, пулă изделийĕсем енчен те пуян магазин, мĕн тĕрлĕ кăна кăлпасси çукши тата?!

Ку таранччен чылай магазинсенче пулса курнă, тавар туяннă. Темиçе хутчен виççе, шутласа пăхсан та, çакна палăртсах калама пултаратăп: «Магнит» енчĕкри укçатенкĕне перекетлеме пулăшакан магазин. Эпĕ хама мĕн кирлине юлашки вăхăтра пĕтĕмпех кунта туянма пуçларăм. Шутласа пăхатăп та, чăнах та, ытти çĕртинчен чылай йўнĕрех ларать. Тата туянакан тавар пахалăхĕ пирки иккĕленессĕм çук, мĕншĕн тесен кунта мĕн сутнине тутанса пăхсах тăратпăр-иç. Манăн тупăш пĕр пенси укçи кăна, ăна перекетлĕ тыткалама мана «Магнит» пулăшать. Эсир те çитсе курăр çак магазина, хăвăрах курса ĕненĕр: пире, ял çыннисене, тивĕçтермеллипех тивĕçтерет вăл.

## КОМБАЙНЕРЫ НА УБОРКЕ УРОЖАЯ

/на 5 сентября, в тоннах/

| Ф. И. О. | Хозяйства | Ма ком |
|---|---|---|
| Шибаев Ф. М. | «Кр. партизан» | Дон-15 |
| Васильев В. Н. | «Кр. партизан» | Дон-15 |
| Шаршевич В. Ф. | ОАО «Рассвет» | Дон-15 |
| Белов В. Р. | «Кр. фронтовик» | Енисе |
| Гордеев В. И. | им. Ильича | Дон-15 |
| Никитин А. Н. | «Патман» | Енисе |
| Чандров И. И. | им. Калинина | Енисе |
| Григорьев В. Н. | ОАО «Рассвет» | Дон-15 |
| Сюдамов С. А. | им. Ильича | СК-5 Н |
| Ярзунов Н. Р. | ЗАО АФ «Ибресинская» | СК-5 Н |
| Анисимов О. Д. | им. Ильича | СК-5 Н |
| Петров А. В. | им. Калинина | СК-5 Н |
| Романов Н. Н. | им. Калинина | СК-5 Н |

## МЕХАНИЗАТОРЫ НА ПОДЪЕМЕ ЗЯБИ И ПОДГОТОВКЕ ПОЧВЫ ПОД ОЗИМЫЕ

/на 5 сентября, в гектарах/

| Ф. И. О. | Хозяйства | Ма тра |
|---|---|---|
| Иванов А. И. | «Красный партизан» | Т-150 |
| Егоров П. А. | им. Калинина | ВТ-150 |
| Васильев В. Н. | «Красный партизан» | |
| Никифоров А. В. | «Патман» | МТЗ-8 |
| Петров Н. В. | ЗАО АФ «Ибресинская» | МТЗ-8 |
| Степанов В. М. | ЗАО АФ «Ибресинская» | МТЗ-8 |
| Гордеев С. Н. | ЗАО АФ «Ибресинская» | МТЗ-8 |
| Гаврилов А. Н. | ОАО «Рассвет» | Т-150 |

### ОБРАТНАЯ СВЯЗЬ

## «ВАЖНЫЙ ВОПРОС» ОТВЕЧАЕТ

**ВОПРОС:** ***Каким образом производится доплата заместителю руководителя государственного предприятия в случае, если он выполняет обязанности руководителя предприятия во время его очередного отпуска?***

**Валерий Григорьевич Музыков, с. Моргауши.**

**ОТВЕТ:** В соответствии со ст. 151 Трудового кодекса размеры доплаты за совмещение должностей или исполнение обязанностей временно отсутствующего работника устанавливаются по соглашению сторон трудового договора. Поэтому, прежде чем приступить к исполнению новых обязанностей Вам, следует договориться об условиях оплаты труда.

**ВОПРОС:** ***В 1988 году моя семья получила социальное жилье. Сейчас на жилое помещение открыто два лицевых счета; в квартире, кроме меня, прописаны мои дети и брат, который не оплачивает коммунальные услуги. Недавно стало известно, что лицевые счета были объединены, без нашего заявления. Возможно ли выписать моего брата из квартиры, и правомерно ли были объединены лицевые счета?***

**Тимофеева Наталья.**

ОТВЕТ: Уважаемая Наталья, поскольку Ваш брат приобрел право пользования квартирой, то выписать его в соответствии с законом невозможно. Что же касается объединения лицевых счетов, то это возможно только по согласию их владельцев.

**Передачу «Важный вопрос» также слушайте по будним дням на «Радио России» и радио «Маяк». Ведущий – депутат ЧГСД Евгений Слепов.**

**Письма с вопросами присылайте на адрес газеты «За победу».**

### ЫРĂ ПУÇАРУ

## ПĔВЕСЕМ ТАСАЛАÇÇĔ

Халĕ кăна мар ĕнтĕ, Йĕпреç поселокĕнче пурăнакансем малтан та пĕвесем таса марришĕн пăшăрханнине пĕлтернĕ. Камăн-ха таса шывра ишсе, пулă тытса, илемлĕ тавралăхра уçăлса çӳресе савăнас килмĕ!

Тăван тавралăхăн экологи тĕлĕшĕнчи тасалăхне тавăрас тĕлĕшпе ырă пуçару тума шутланă та ĕнтĕ уйрăм предприниматель Алексей Прокопьев. Шăпах вăл ентешĕмĕрсен пысăк ыйтăвне пурнăçлама – пĕвесене тасатас ĕçсене – хăй пуçарăвĕпе тытăннă. Ку тапхăрта вăл Радищев урамĕнчи пĕвере тулнă ăпăр-тапăра тасатса кăларнă. Халĕ вара Куйбышев урамĕнчи пĕвене тасатма пуçланă. Малашлăх планĕсем татах та пысăкрах унăн: Юбилейный тăкăрлăкĕнчи пĕве те черетре.

Пĕвесем таса пулни тавралăх илемĕшĕн кăна кирлĕ мар, вĕсенчи шыв пушар кăларса тăратакан хăрушлăхра, вут-çулăма хирĕç тăнă чух, питех те кирлĕ.

***/Район администрацийĕн сайтĕнчен/.***

## ИНВАЛИД ТУЛЛИ ПУРНĂÇПА ПУРĂНТĂР

Çемьере куç курманнипе аптăракан çын пулсан унта проблемăсемпе татса памалли ыйтусем тăтăшах сиксе тухаççĕ. Çав вăхăтра тĕрĕс йышăну тума пĕлмелле. Çемье членĕсен манма юрамасть, суккăр çыннăн пурнăçĕ мĕнле иртесси вĕсенчен пуринчен те килет, çавăнпа çемьери хутшăнусем кирек хăçан та лăпкă пулмалла. Инвалида асăрхамасăр персе янă сăмах та кӳрентерме, кăмăлне хуçма пултарать, çавăн пекех ытлашши пăхни те кирлĕ мар. Ку ăна пурнăçне хăй тĕллĕн йĕркелесе пыма чăрмантарать.

Куç курман çыннăн реабилитаци курсĕнче пулни аван, унпа пĕрле пурăнакан тăванĕсен вара куç курманнисемпе мĕнле тĕрĕс хутшăнмалли çинчен ăнлантарса панă литературăпа тĕплĕн паллашмалла. Çемьере лăпкă лару-тăру пултăр тесе тăрăшмалла, куç курман çынна ăс-хакăл тĕлĕшĕнчен аталанма, сывлăхне çирĕплетсе пыма условисем туса памалла.

Çемьере пĕр-пĕрне ăнланса пурăнсан, инвалида та çăмăлрах, вăл хăйне шанчăклă тытать, тулли пурнăçпа пурăнма пултарать. Инвалид пурăнакан çемьесенче кирлĕ пек атмосфера тытса тăма чĕнсе калас тĕллевпе нумаях пулмасть пирĕн общество интеллектуаллă конкурс-вăйă ирттерчĕ. «Мăшăр çунат» ятпа иртрĕ вăл. Конкурс спонсорĕ пулса Таисия Павловна Федорова хутшăнчĕ. Куç курман çынсене хĕрхеннине, вĕсене пулăшма хапăл пулнине вăл çапла ырă ĕç туса палăртрĕ. Куç курманнисен обществин членĕсем ăшă кăмăллă хĕрарăма чунтанах тав тăваççĕ.

***Г. МЯСНИКОВА, куç курманнисен районсем хушшинчи обществин председателĕ.***


### ВНИМАНИЮ РУКОВОДИТЕЛЕЙ, ГЛАВНЫХ БУХГАЛТЕРОВ ПРЕДПРИЯТИЙ, ОРГАНИЗАЦИЙ, ХОЗЯЙСТВ, УЧРЕЖДЕНИЙ

**РГУ «Редакция Ибресинской райгазеты «Çĕнтерӳшĕн» («За победу») принимает заказы на изготовление всех видов бланочной, этикеточной и книжно-журнальной продукции.**

**В продаже имеются:**

**приходные, расходные кассовые ордера, путевые листы легковых и грузовых автомобилей, товарно-транспортные накладные, авансовые отчеты, накладные, доверенности, командировочные удостоверения, табеля использования рабочего времени, личные карточки, амбарные, главные кассовые книги, книги покупок и продаж, книги по заработной плате, книги учета расходов и доходов. Цены низкие.**

**Обращаться по адресу: п. Ибреси, ул. Садовая, д. 6, 1 этаж, производственный участок, редакция газеты или по телефону: 2-11-97.**






## ПĔТĔМ РАÇÇЕЙРИ КОНКУРСРА ÇĔНТЕРНĔ

Швеци çĕршывĕн писательници Астрид Линдгрен çуралнăранпа 100 çул çитнĕ тĕле пирĕн çĕршывра «Карлсон вĕçсе килчĕ» («Карлсон прилетел») темăпа çамрăк художниксен конкурсне ирттернĕ.

Кăрлачăн 1-мĕшĕнчен пуçласа çу уйăхĕн 31-мĕшĕччен ӳкерме юратакан ачасем хăйсен ĕçĕсене çак конкурса тăратма пултарнă. Çак конкурса йĕркелесе ирттерекенĕ информаци технологийĕсене ирĕклĕ майпа сертификацилекен тытăм пулнă. Конкурс тĕллевĕсем – ачасен фантазине аталантарасси, ӳкерес пултарулăхне ӳстересси, ачасенче ырă, ăшă туйăмсене вăратасси, пĕтĕм тĕнчери юмахçă-писательсен ĕçĕсене хисепе хума хăнăхтарасси.

Йĕпреçри ача-пăчасен искусство шкулĕн вĕренекенĕсем те çак конкурс программине хутшăнма кăмăл турĕç. Ачасем хавхалансах ӳкерчĕç, нумай интереслĕ ĕçсем тăратрĕç. Анчах лайăх суйласа илнĕ хыççăн, 6 ĕçе кăна Мускава ярса пама килĕшрĕмĕр. Пĕтĕм Раççей шайĕнче иртнĕ конкурса вара Раççейри 51 регионтан пĕтĕмпе 6000 яхăн ĕç тăратнă. Çав ӳкерчĕксем хушшинче пирĕн ачасен ĕçĕсем «çухалса» кайман, конкурс комиссийĕ вĕсене чи лайăххисен шутне кĕртнĕ. Акă пирĕн искусство шкулĕнчи ӳнер уйрăмĕнче вĕренекен 11 çулти Настя Варганова (преподавателĕ Владимир Ермолаевич Семенов) çак конкурсра «Эпĕ тата педагог» номинацире 2-мĕш вырăн çĕнсе илнĕ. Унăн «Карлсон – паттăр» ӳкерчĕкĕ 2-мĕш степеньлĕ диплома, укçан приза тата хаклă парнене тивĕç пулнă. Настя Варганова *(сăнӳкерчĕкре)* пĕчĕклех художество уйрăмне вĕренме пырса кĕнĕ, вăл ӳкерме питĕ юратать. «Кун йышши конкурссем татах та пулсан, эпĕ вĕсене хаваспах хутшăнăп», – тет хавхалануллăн Настя.

Пĕтĕм Раççей шайĕнчи конкурса пĕтĕмлетнĕ пекех, кашни регионтах пĕтĕмлетӳсем тунă. Республикăра иртнĕ конкурсра «Эпĕ хамах» номинацире Пучинкери вăтам шкул çумĕнче ĕçлекен искусство шкулĕн вырăнти уйрăмĕн воспитанници, «Колосок» ача садне çӳрекен 3 çулти Аня Русскова *(сылтăмри ӳкерчĕкре)* çĕнтерӳçĕ пулса тăнă. Унăн «Карлсон чечеклĕ уçланкăна вĕçсе килчĕ» ĕçĕ çĕнтерӳçĕ дипломне тата хаклă парнене тивĕçнĕ. Аньăна хавхалантараканĕ – унăн амăшĕ Светлана Степановна Русскова. Вăл – Йĕпреçри ача-пăчасен искусство шкулĕн Пучинкери уйрăмĕн преподавателĕ.

Çĕнтерӳçĕсене ăшшăн саламлатпăр, район чысне пĕтĕм Раççейри конкурсра чыслăн хӳтĕленĕшĕн тав тăватпăр.

***/Район администрацийĕн сайтĕнчен/.***

### СУД ЗАЛĔНЧЕН

**Йĕпреç район сучĕ çурла уйăхĕн 23-мĕшĕнче В. П. Сапожникова судья ертсе пынипе тата патшалăх айăплавçи пулса район прокурорĕн çумĕ Л. В. Можаева хутшăннипе А. Васильева гражданкăна айăплассипе пуçарнă уголовнăй ĕçе пăхса тухнă.**

## УЛТАВĂН УРИ КĔСКЕ

Суд ларăвĕнче пăхса тухнă А. Васильеван ĕçĕ пирки çакă паллă пулчĕ. «Йĕпреçри психоневрологи интерначĕ» республикăри патшалăх учрежденийĕнче арçынсен уйрăмĕнче сестра-хозяйка пулса ĕçленĕ А. Васильева саккун йĕркине пăснă, айăпа кĕнĕ. Вăл çак уйрăмра яваплă должноçра ĕçлекенскер, пĕлсе тăрсах, саккунсăр майпа хăйне пайта илес шутпа, ăна упрама панă «Йĕпреçри психоневрологи интерначĕ» штамплă япаласене – çемçе алшăллисене, çĕнĕ вырăн хатĕрĕсене (пододеяльник, простынь, минтер пичĕсене) арçын шăлаварне, майкине, трико – килне куçарнă. Пĕтĕмпе 1693 тенкĕлĕх пурлăха хăйĕн туса хунă.

Кунсăр пуçне А. Васильева, психоневрологи интернатĕнчи пеккун канашĕн членĕ пулнă май, хăйсен хевтесĕр сывлăхне пула укçа-тенкĕ шутне пĕлмен çынсене улталанă: интернатра пурăнакансене патшалăх пенсийĕн 25 процентне алăран паракан укçапа хăй пĕлнĕ пек хуçаланнă. Кăçалхи пуш (март) уйăхĕн 21-мĕшĕнче, акă, психоневрологи интернатĕнче пурăнакан инвалидсене пенси укçине валеçсе панă хыççăн, вăл çав суммăна хăй алне илнĕ, инвалидсене пеккун «пулăшăвĕ»: апат-çимĕç продукчĕсемпе ытти хăш-пĕр япаласем туянса пама пулнă. Анчах алла кĕнĕ ют укçана тавар туянса пĕтереймен вăл, ячĕшĕн ăна-кăна туянкаласа панă та юлнă укçана – 6850 тенкĕне – хăйĕн енчĕкĕнчех хăварнă. Вăл çак укçапа хăй пĕлнĕ пек усă курма шутланă.

Кирек мĕнле вĕренĕн те вĕçĕ пур, теççĕ. Ку киревсĕрлĕх те çиеле тухрĕ.

Ĕçе тĕплĕн тишкерсе пăхса тухнă хыççăн, суд А. Васильева гражданкăна ултавлă майпа ют пурлăха ярса илнĕшĕн, тепĕр майлă каласан, ют пурлăха çаратнăшăн условнăй майпа 2 çуллăха ирĕкрен хăтарма приговор йышăннă, тĕрĕслесе пăхмалли срока та 2 çула тăснă.

Йĕплĕ суд сакки çине ларни урок пулĕ-ши А. Васильевашăн? Ют çын пурлăхне хапсăнасси юнра пулмасан, вăл тӳрленессе шанма пулать.

***Л. МОЖАЕВА, район прокурорĕн çумĕ.***

# «Я – ЗА БЕЗОПАСНОСТЬ НА ДОРОГАХ РОССИИ!»

«Безопасные дороги» – так называется партийный проект «Единой России». Его цели – сокращение числа погибших и пострадавших в дорожно-транспортных происшествиях, сокращение количества ДТП, повышение культуры поведения на дорогах.

А в середине сентября стартует Всероссийская акция «Единой Росси» «Я – за безопасность на дорогах Росси!»

Основными целями акции являются: снижение числа ДТП, погибших и раненых на автодорогах, повышение культуры поведения на дорогах, создание актива из числа дисциплинированных, вежливых водителей и расширение круга его участников.

Водителям предлагается подписать листовку с добровольно взятыми на себя обязательствами, не нарушать указанные в листовке правила поведения на автодороге и тем самым вступать в сообщество водителей, ведущих себя на дорогах вежливо и безопасно. После подписания листовки водителю вручается номерная карточка, которая крепится на стекло автомобиля. Владельцы карточек могут обратиться в крупнейшие страховые компании (указаны в тексте листовки) для получения 5 процентной скидки при оформлении полиса страхования КАСКО своего автомобиля.

По данным за первое полугодие этого года на автодорогах России погибло более 12 тысяч человек, ранено – свыше 123 тысяч! И это больше чем в прошлом году за этот же период. Все мы практически участвуем в настоящей войне с большим числом убитых и раненых, говорится в обращении организаторов акции.

Многим из нас надоел беспредел на дорогах, неспособность соответствующих служб навести должный порядок. Понимая это, предлагаем водителям, ведущим себя корректно на дорогах, объединить усилия и тогда все мы вместе, объединившись, сможем изменить ситуацию, ведь «сбережение народа», по сути, один из главнейших национальных приоритетов.

Ведущие страховые организации России: Росгосстрах, СОГАЗ, Альфа-Страхование, УралСиб, Стандарт-Резерв, РЕСО-Гарантия, Согласие, РОСНО, МАКС, Русский мир, Спасские ворота, НАСТА, Московская страховая компания поддержали эту инициативу и выступили с предложением представлять участникам акции скидки по страхованию КАСКО автомобилей.

**Водители!**

**Присоединяйтесь к акции «Я – за безопасность на дорогах России».**

**Что для этого нужно?**

Внимательно прочитайте Правила поведения на автодорогах участника акции «Я – за безопасность на дорогах России» и соблюдайте их:

– не превышайте установленную скорость движения;

– не садитесь за руль нетрезвым;

– не проезжайте на красный сигнал светофора;

– не выезжайте на полосу встречного движения;

– будьте предельно внимательны в любом месте, где есть дети, особенно у школ и детских учреждений;

– не ведите себя агрессивно на автодороге;

– уступайте дорогу водителю, ведущему себя агрессивно – ведь он еще не участник нашей акции;

– уступайте дорогу пешеходам;

– пристегивайте себя и пассажиров автомобиля ремнями безопасности;

– будьте особо внимательны на перекрестках;

– знайте правила оказания помощи пострадавшим в ДТП и в случае необходимости окажите помощь пострадавшему;

– уступайте дорогу машинам скорой медицинской помощи, МЧС, МВД и спецслужбам;

– не садитесь за руль уставшим и в возбужденном состоянии;

– если засыпаете за рулем – остановитесь и отдохните;

– не предлагайте взяток работникам ГИБДД.

# В ПОДДЕРЖКУ МАЛОГО ПРЕДПРИНИМАТЕЛЬСТВА

Отдел экономики и управления имуществом администрации Ибресинского района сообщает, что Министерством экономического развития и торговли ЧР в целях государственной поддержки субъектов малого предпринимательства, производится субсидирование процентных ставок по кредитам, полученным субъектами малого предпринимательства (малыми предприятиями, потребительскими кооперативами, индивидуальными предпринимателями) в кредитных организациях. Для получения кредита субъектами малого предпринимательства ООО «Гарант-консалтинг» (г. Чебоксары) разрабатывает на безвозмездной основе бизнес-планы и технико-экономические обоснования при наличии ходатайства главы района.

Субсидирование процентной ставки производится также по ранее полученным кредитам, т. е. по кредитам, полученным в 2006 году в качестве субъекта малого предпринимательства.

Список документов, необходимых для субсидирования процентной ставки по кредитам и ходатайство главы района на разработку бизнес-плана можно получить в отделе экономики и управления имуществом (каб.307) администрации района.

Все документы на субсидирование процентных ставок по кредитам необходимо представить в Министерство экономического развития и торговли ЧР (Президентский бульвар,10).

Справки по телефону: 2-25-71.

*3-2*

**УВАЖАЕМЫЕ РЕКЛАМОДАТЕЛИ!**

**Делайте бизнес с нами. Реальный тираж, реальная реклама.**

**Телефоны: 2-11-92, 2-11-97.**

**МОУ «ИБРЕСИНСКАЯ СРЕДНЯЯ ШКОЛА №1»**

**срочно требуется вожатая.**

**ООО «РЕАЛ-БИЗНЕС-ЛЕС»**

**приглашает на работу разнорабочих, электрика, водителя, упаковщиц. Тел.: 89093011953.**

**646. ПРОДАЮ керамблоки, дешево. Тел.: 89030646285.**

**2-1**

**Ильич ячĕллĕ колхоз правленийĕ пĕтĕм ялйышпа пĕрле хуçалăхра тĕрлĕ яваплă ĕçсенче тивĕçлипе ĕçленĕ**

**ГАВРИЛОВ**

**Сергей Семенович**

**вăхăтсăр вилсе кайнă пирки унăн мăшăрĕпе, ачисемпе, тăванĕсемпе пĕрле чун-чĕререн хурланни çинчен пĕлтереççĕ.**

## СĂМАХКАÇМĂШ




**СУЛАХАЙРАН СЫЛТĂМАЛЛА:** 1. Атăл юппи. 3. Коми Республикин тĕп хули. 8. Красноармейски салин ĕлĕкхи ячĕ. 13. Чечек. 14. Паттăрсене асăнса лартнă обелиск. 15. ... săн (кал.). 19. Хĕрача ячĕ. 20. Театрти вырăн. 21. Чили çĕршывĕнчи пысăк пуш хир. 22. Пулă тытмалли хатĕр. 24. Дон-Кихота «çуратнă» автор. 25. Шывра пурăнакан чĕрчун. 29. Италире тухса тăнă коммунистсен хаçачĕ. 30. Тинĕсри çăткăн пулă. 31. Вăрăм майлă вĕçен-кайăк. 32. Чечек те, хĕрача ячĕ те. 33. Çимĕç йывăççи. 34. Тӳпе маччи, ун тавра хĕвел çаврăнать. 35. Чăвашсен паллă çыравçи. 36. Тинĕс-океанра çӳрекен икĕ парăслă карап. 40. Çар хатĕрĕ. 45. Англи çĕршывĕн урăхла ячĕ. 47. Каç семĕ çапнă тапхăр. 48. Чăваш академи драма театрĕнче хăйĕн хĕрне качча паракан инке. 49. Йывăç каснă вырăнта мĕн ларать? 53. Китайри тарçă. 54. Шыв кукрине мĕнле калаççĕ? 55. Кăмăла ирĕке яни. 56. Йĕпреçри шкул-интернатра ĕçлекен хĕрарăм-педагог. 57. Юханшыври тарăн вырăн.

**ÇӲЛТЕН АЯЛАЛЛА:** 1. Паллă юрăç, Чăваш халăх артистки. 2. Урăх çĕршыв укçи. 4. Кĕрхи культура. 5. Кадр айне çырнă текст. 6. Салтак, кĕрешӳçĕ. 7. Тырă сăвăрнă хыççăн мĕн юлать? 9. Хĕç-пăшал та, космоса вĕçекен аппарат та. 10. Тарас Шевченко çырнă поэма. 11. Вырăссен паллă ача-пăча поэчĕ, Шекспир сонечĕсен куçаруçи. 12. Чиркӳри таса вырăн. 16. ... мучи юррисем – Чăвашрадиора çак передача тĕпреччĕ. 17. Гана çĕршывĕн тĕп хули. 18. Кулăшла ĕç, мыскара. 23. Пĕр çулхи çынсен ушкăнне пĕтĕмлетекен паллă. 26. Политикăра вăтанса-туса тăман çын. 27. Чăвашсен хĕрарăм-сăвăçĕ. 28. Кил-çурта иленнĕ сиенлĕ хурт-кăпшанкă. 35. Федор Павлов çырнă «Судра» камитри сăнар. 37. Эстонири вата хула. 38. Чăваш хĕрарăмĕн ячĕ. 39. Панулми сорчĕ. 41. Çар комиссариатне ертсе пыракан çын. 42. Тепĕр майлă – мĕлке. 43. Кӳмеллĕ рессорла урапа. 44. Ватă арçын та, упăшка та. 46. Шăрттан ялĕнчи анлă саралнă хушамат. 49. Тавар хумалли хатĕрсен йывăрăшĕ. 50. Афганистанри хула. 51. Казахсен юрăçи. 52. Ростов облаçĕнчи хула.

## САЛАМЛАТПĂР

Тулăх кĕр мăнтăрĕпе пĕрле паллă тăвать хăйĕн чаплă юбилейне – çуралнăранпа 55 çул çитнине пирĕн хаклăран хаклă, юратнăран юратнă çыннăмăр – пурнăç çулĕпе юнашар утакан мăшăр, ачисене çут тĕнче парнеленĕ анне, мăнукĕсене чĕрçи çине лартса утьăкка сиктерекен асанне – Хумпуç Патăръелĕнчи ятлă сумлă хĕрарăмсенчен пĕри, ял клубĕнче чылайранпа ĕçлекен **Юлия Тимофеевна Демидова.** Çак манăçми кун ячĕпе эпир ăна хăйĕн ытамне кĕми пысăк та хĕвел хĕрӳлĕхĕпе тулнă вĕри туйăмлă салам яратпăр, ӳлĕмрен те хальхи пекех ĕçчен те тăрăшуллă пулма, кил-йышра, ял-йышра çынлăха, чыс-сума упрама, çывăх çыннисен савăнăç-телейне пĕрле пайлама çирĕп сывлăх, çутă ăраскал, таса ăшпиллĕх сунатпăр.

Ан ватăл, ырă çыннăмăр, нихçан,
Эс пул пирĕнпе юнашарах ялан.
Кун çул сукмакĕпе пĕрле кăна утасчĕ,
Мĕнпур йывăрлăха йышпа
çĕнсе пырасчĕ.

***МĂШĂРĔ, 2 ЫВĂЛĔПЕ ХĔРĔ, КИНĔСЕМ, 4 МĂНУКĔ, ÇЫВĂХ ТĂВАНĔСЕМ.***



Юратнă мăшăра, пире хĕвел çути парнеленĕ тăван аттене, кĕрӳшĕсемпе кинĕсене хăйĕн ачисем пекех хисеплекен хуньăмпа хуняçана, мăнукĕсене тулли кăмăлпа кĕтсе илекен асатте-кукаçине, ял-йышпа, тăвансемпе килĕштерсе пурăнакан, кирек хăçан та пĕр чĕлхе тупма пултаракан çыннăмăра – Пĕчĕк Упакассинче пурăнакан, «Путиловка» колхозра хĕрĕх çул ытла яваплă вырăнсенче ĕçленĕ **Иван Андреевич ЯКОВЛЕВА** тулăх кĕр кунĕнче паллă тăвакан юбилейпа – çуралнăранпа 70 çул çитнĕ ятпа чун-чĕререн, хĕрӳллĕн те тараватлăн саламланă май, пурнăç çулĕпе малашне те шанчăклăн утма, ĕмĕт-тĕллевсене ĕçпе çирĕплетсе пыма, ачисемпе, мăнукĕсемпе савăнса киленме ырлăхăнăçу, çăл куç таппиллĕ сывлăх, çутă телейпе ăраскал сунатпăр.

***МĂШĂРĔ, ЫВĂЛĔСЕМПЕ ХĔРĔСЕМ, КИНĔСЕМПЕ КĔРӲШĔСЕМ, МĂНУКĔСЕМ, ÇЫВĂХ ТĂВАНĔСЕМ.***

Ответственность за подробность и точность фактов и прочих сведений, опубликованных в газете, несут авторы. Редакция может публиковать статьи в порядке обсуждения, не разделяя точку зрения автора.

*За главного редактора* БЫКОВА С. В.

Çĕнтерӳшĕн (За победу)

Учредитель: Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела ЧР

Адрес РГУ «Редакция Ибресинской райгазеты «За победу»: 429700, п. Ибреси, ул. Садовая, д. 6

ТЕЛЕФОНЫ: главный редактор — 2-11-92, ответственный секретарь — 2-11-93, отдел сельской жизни — 2-11-95, отдел по дубляжу — 2-11-96, бухгалтерия, стол заказов — 2-11-97. АДРЕС ГУП "Вурнарский издательский дом": 429220, п. Вурнары, пер. Коммунальный, 4. ТЕЛЕФОНЫ: 2-12-30, 2-19-40.

Газета зарегистрирована Приволжским окружным межрегиональным территориальным управлением Министерства РФ по делам печати, телерадиовещания и средств массовых коммуникаций 13 августа 2002 года. Регистрационный номер ПИ № 18-0918.

Номер набран и сверстан в компьютерном отделе редакции, отпечатан в ГУП "Вурнарский ИД". Индекс 54814. Офсетная печать. Объем 1,5 п. л. Тираж 3289 чув. – 2429, русск. – 860. Зак. №

Газета выходит два раза в неделю — по средам и субботам на чувашском и русском языках. Материалы на правах рекламы обозначены знаком Ⓟ

Срок сдачи в печать — 17.00

Сдан в печать в 10.00

Ответственный за выпуск Кузнецов Г. В.